Спорт хыпарĕсем

# Район хаçачĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн

Районта Тыр-пул уявне паллă тунă кунах, октябрĕн 14-мĕшĕнче, Муркаш шкулĕн стадионĕнче çуллахи спорт сезонне хупнă ятпа районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетсен кĕркуннехи ăмăртăвĕ иртрĕ. Мĕнех тăвăн, кĕрхи çанталăк уяр кунсемпе савăнтарни сайра. Çанталăк йĕпе-сапаллă пулчĕ. Апла пулин те ăмăрту тивĕçлĕ шайра иртнине палăртма кăмăллă.

«Муркаш издательство çурчĕ» патшалăх унитарлă предприятийĕн директорĕ-тĕп редакторĕ А.И. Тихонов ăмăртусенче пурне те ăнăçусем, çитĕнекен ăрăва ăмăртусенче çеç мар, пурнăçра та ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунчĕ. Ăмăртусене вара 22 команда хутшăнма кăмăл тунă. Вĕсенчен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем 15 тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем 7.

Хĕрӳ кĕрешӳре иртрĕ ăмăрту. Апла пулин те пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем хушшинче Калайкассисем пултарулли палăрчĕ. Икĕ команда тăратнă вĕсем ăмăртăва. Иккĕшĕ те çĕнтерӳçĕсен йышне кĕме тивĕçрĕç. Шкулăн пĕрремĕш команди пĕрремĕш, иккĕмĕш команди иккĕмĕш вырăнсене пайларĕç. Район хаçачĕн куçса çӳрекен кубокне шкулăн пĕрремĕш команди çĕнсе илчĕ. Виççĕмĕш вырăна вара тивĕçлипех Чуманкасси шкулĕн команди çĕнсе илме пултарчĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсен командисем хушшинче те хĕрӳ кĕрешӳ пычĕ. Куçса çӳрекен кубока камăн çĕнсе илес килмĕ. Чи пултарулли Панкли шкулĕн команди пулчĕ, ыттисене хыçа хăварма пултарчĕ. Шомик шкулĕ иккĕмĕш, Сосновка шкулĕ виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç.

Çĕнтерӳçĕсене куçса çӳрекен кубоксемпе парнесем панă май район хаçачĕн тĕп редакторĕ А.И. Тихонов ăмăртăва хутшăнма кăмăл тунă командăсене тав сăмахĕ каларĕ, çĕнтерӳçĕсене саламларĕ, малашне те ăмăртусенче, вĕренӳре ăнăçусем сунчĕ.

Ăмăртăва хатĕрленсе ирттерме пулăшакансене – уйрăм тав сăмахĕ. Кунта чи малтанах район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалистне Михаил Ананьевич Романова, ăмăртăвăн тĕп судйине – район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорне Федор Александрович Рылина, ăмăрту секретарьне – В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн завучне Юрий Анатольевич Ершова асăнмалла.

**В. ШАПОШНИКОВ.**



Район хаçачĕн куçса çӳрекен кубокĕсемпе парнисем.



Шкул ачисем стартра.



Панклири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул команди çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.



Калайкассинчи вăтам шкул командисем иккĕшĕ те призлă вырăнсем йышăнчĕç, пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене пайларĕç.

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Ирĕклĕ майпа кĕрешсе

Октябрĕн 14-мĕшĕнче Шупашкар хулинче 1990-1991 çулсенче çуралнă яшсем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Ку ăмăртусенче Йӳçкассинчи вăтам шкулта 10-мĕш класра вĕренекен Сергей Тимофеев хăйне лайăх енчен кăтартса панă. 76 килограмлă виçе категорийĕнче ăмăртса вăл икĕ тытăçăва çĕнтерӳпе вĕçлеме пултарнă. Пĕрремĕш тытăçура ачасемпе çамрăксен 5-мĕш номерлĕ спорт шкулĕнчи Дмитрий Акчуринран выляса илме пултарнă, иккĕмĕшĕнче Олимп резервĕсен училищин воспитанникне Алексей Медведева çĕнтернĕ. Финалти ăмăртура ачасемпе çамрăксен 5-мĕш номерлĕ спорт шкулĕнчи Иван Толстова выляса ярса иккĕмĕш вырăн йышăннă, кĕмĕл медале тивĕçнĕ.

Унчччен эрне маларах РФ нефтьпе газ промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн, Красноармейски районĕн хисеплĕ гражданинĕн А.И. Слукинăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен ăмăртăвĕ иртнĕ. Чăваш спортсменĕсемсĕр пуçне унта Тутарстанри, Çармăс Республикинчи кĕрешӳçĕсем те хутшăннă. Ку ăмăртусенче Муркаш лицейĕнчи Артур Сумин тата Ким Лукин палăрнă, хăйсен виçе категорийĕсенче иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă, дипломсепе медальсем тата парнесем çĕнсе илнĕ.

**А. ФЕДОРОВ,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн аслă тренерĕ.**

## Мини-футбол енĕпе ăмăртрĕç

Октябрĕн 15-мĕшĕнче Тивĕш шкулĕнче Б.И. Павлова асăнса мини-футбол енĕпе спорт ăмăртăвĕсем иртнĕ. Вĕсене Муркаш, Шупашкар, Красноармейски тата Элĕк районĕсенчен 9 команда хутшăннă. Тивĕшсене çитекенни пулман, вĕсем пĕрремĕш вырăна тухнă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене «Аршин» ООО тата «Слава» хуçалăх (Шупашкар районĕ) командисем пайланă.

Уйрăм номинацисенче чи пултаруллисене те палăртнă. Чи лайăх тапăнса вылякан Олег Егоров, чи лайăх хӳтĕлевçĕ Андрей Иванов тесе йышăннă.

Ăмăртăва ирттерме пулăшакансене – Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхне Н.П. Александрова, фермер хуçалăх ертӳçине А.Н. Михайлова тата ачасемпе çамрăксен В. Егорова ячĕпе хисепленекен спорт шкулне, тренерсене – пысăк тав.

## Хăвăрт утассипе мала тухнă

Октябрĕн 14-мĕшĕнче СССР спорт мастерĕ, РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ физкультура ĕçченĕ В.М. Краснов ячĕпе шкул ачисен спартакиади шучĕпе хăвăрт утассипе ăмăртусем иртнĕ. В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсем унта хутшăнса япăх мар результатсем кăтартнă. Хĕрсем хушшинче Нина Охотникова 3 километрлă дистанцире çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Марина Смирновапа Ирина Портнова вара 2 километрлă дистанцире кĕçĕн çулхи хĕрсем хушшинче иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă. Петр Трофимов, Василий Трофимов, Вера Соколова та ăмăртусенче япăх мар кăтартусем тунă, хăйсен ушкăнĕсенче малти вырăнсене йышăннă.

## Пилĕк команда хутшăннă

Çулленех районти Тыр-пул уявĕнче предприятисемпе организацисен, учрежденисен физкультура коллективĕсем хушшинче мини-футбол енĕпе ăмăртусем ирттереççĕ. Октябрĕн 14-мĕшĕнче ку ăмăрту районти Спорт çурчĕн площадкинче иртнĕ. 5 команда хутшăннă унта: Муркаш шкулĕ, «Моргаушская» строительство организацийĕ, «Аршин» чикĕллĕ харпăрлăхлă общество, «Оринино» тата Ильич яч. хис. хуçалăхсем.

Хĕрӳ кĕрешӳре «Моргаушская» строительство организацийĕн команди мала тухма пултарнă. «Оринино» хуçалăх команди кăшт кăна выляса янă, ăмăрту итогĕсемпе иккĕмĕш пулнă. Виççĕмĕшĕ – «Аршин» ООО команди.

Çĕнтерӳçĕсем дипломсене тата парнесене тивĕçнĕ.

## Кире пуканĕ çĕклессипе

Октябрĕн 21-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче кире пуканĕ çĕклессипе ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен командисем хушшинче ăмăрту иртет. Командăра 6 çын пулмалла. Вăл шутран 5 участник тата 1 представитель. Спортсменсем 60, 70, 80, 90 тата 90 килограмм ытларах виçе категорийĕсенче вăй виçеççĕ.

Мала тухнă команда район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн куçса çӳрекен кубокне тата диплома, призлă вырăн йышăннисем дипломсене тивĕçеççĕ.

Тав туни

## Тараватлăх малти вырăнта

Çын пурнăçĕ кĕскерен вăл илемлĕ те вăрăм пуласси тата пурнăçра телей кăна курасси хамăр хушăмăрти тараватлăхпа, килĕшӳллĕ хутшăнупа тачă çыхăннă. Анчах хамăр пурнăçа пур чухне те илемлĕ сăрăсемпе çеç илемлетме те тӳр килмест.

Октябрĕн 4-мĕшĕнче тĕрлĕ сăлтавсене пула ĕçрех хама питĕ япăх туйма пуçларăм. Сывлăха тĕрĕслеттерме пĕр тăхтаса тăмасăрах Муркашри тĕп больницăн терапи уйрăмне кайрăм. Мана И.Ф. Королькова кардиолог, Э.А. Фомина терапевт кăмăллă йышăнчĕç, пирвайхи пулăшу панă хыççăн терапи уйрăмне вырттарчĕç. Хавшак сывлăхшăн кашни минучĕ хаклă. Çакна ăнланса çепĕç кăмăллă З.П. Иванова аслă медсестра, А.В. Семеновапа Д.Д. Алешина медсестрасем хăйсен тивĕçĕсене чун-чĕререн пурнăçларĕç, сывлăхшăн пур хăрушлăха сирсе ячĕç. Тайма пуç вĕсене пурне те.

Сăмах май, иртнĕ вырсарни кун ЧР Патшалăх Канашне депутатсем суйланă май район çыннисем районти тĕп больницăн тĕп врачĕшĕн В.Г. Даниловшăн сасă парса пĕртте йăнăш тумарĕç, тетĕп. Вăл çакна тивĕç. Владислав Григорьевич ку таранччен район больницин аталанăвĕшĕн пурнăçланă пысăк калăпăшлă ĕçсем малашне татах сумлăрах пуласса районти тĕп больницăна килекен кашни çын шанать. Çапла пултăрччĕ те.

**Ольга НИКОЛАЕВА.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

23 ●●●●●●● ●9●● 11 ●●●●
СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ
1500; 1700; 2950; 3150 руб.
и УЛЬТРАЗВУКОВЫЕ
СТИРАЛЬНЫЕ МАШИНКИ по ЦЕНАМ ЗАВОДА
850; 1495; 2150; 2500; 3300 руб.
НОВИНКА - “Антисон за рулем”
ПОДАРОК - каждому! СКИДКИ - пенсионерам!
ЗАЩИТИТЕ СЕБЯ от ПОДДЕЛОК!
ПОКУПАЙТЕ У ОФИЦИАЛЬНОГО ПРЕДСТАВИТЕЛЯ ЗАВОДА
ТРЕБУЙТЕ ГОЛОГРАММУ НА ИЗДЕЛИЯХ!
(3412) 45-58-55, 8-922-682-95-00
www.bionikaplus.ru Товар сертифицирован

**Аттестат о среднем образовании № Б 0764989, выданный Большесундырской средней школой в 2004 году на имя Степнова Георгия Александровича, считать недействительным.**

**МУП ЖКХ «Моргаушское» требуются сантехники, электрики, газоэлектросварщики.**
**Обращаться по телефону: 2-13-74.**

**Моргаушскому райпо срочно требуется на постоянную работу гардеробщица. Обращаться в отдел кадров по телефону: 2-19-40.**

Муркаш райповĕн коллективĕ «Центральный» магазинта продавецра ĕçлекен Елена Николаевна Галкинан мăшăрĕ

**Геннадий Вячеславович**
**ГАЛКИН**

сарăмсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3357.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 17.10.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.